2022-2023-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
9 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 120 минут
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумаййи 50 балл пухма пулать

1.Çак йĕркесен авторне тĕрĕс палăртăр. Пĕрремĕш клеткăна автор хушамачĕн малтанхи сас паллине çырăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.*

*Çурхи тĕнче вăраннă чух,*

*Хаваслă кун шăраннă чух*

*Чун савăнать чĕре сикет,*

*Çĕршывăм çинчен юрлас килет.*

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|

2. *Околица, помещик, барышник* сăмахсене чăвашла куçарăр. Малтанхи сас паллине иккĕмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 6 балл.*

3.__________ *арки йăвала.* Сиксе юлнă сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр, пĕрремĕш сас паллине виççĕмĕш клеткăна çырса хурăр. Фразеологизм пĕлтерĕшне ăнлантарăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.*

4. 1-мĕш ыйтура панă сăвă йĕркисенче хăш сăмах хыççăн чарăну палли сиктерсе хăварнă? Сăмахăн хыçалтан иккĕмĕш сас паллине тăваттăмĕш клеткăна çырăр. Чарăну палли лартнин сăлтавне ăнлантарăр. *Сăмахне тĕрĕс тупнăшăн -2 балл, ăнлантарнăшăн- 2 балл. Пĕтĕмпе - 4 балл.*

5. *Качакана* сăмахра мĕнле сасса кĕртсе лартнă? Мĕншĕн? Сăмахри уçă сас паллине пиллĕкмĕш клеткăна çырăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.*

6. Андриян Григорьевич Николаев хăш яла чапа кăларнă? Малтанхи сас паллине улттăмĕш клеткăна çырса хурăр. Николаев çинчен мĕн пĕлетĕр? *Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.*

7. Александр Артемьевăн мĕнле ылтăн çинчен çырнă хайлавĕ пур? *Хуравшăн – 5 балл.*

8. Мĕн вăл хачмак? *Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.*

9. Çыравçăсен хайлавĕсене тĕрĕс шыраса тупăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 8 балл.*

1.Авторсем: Геннадий Айхи, Трубина Мархви, Валентина Элпи, Ева Лисина

2.Хайлав ячĕсем: «Шĕшкĕ», «Çăкăр чĕлли», «Çын тата сцена», «Аппапа пĕрле».

10. Хăвăр тавращра тухса тăракан чăвашла хаçат çинчен çырса парăр. *Тулли хуравшăн - 5 балл.*